25-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 10 пус.

1942 ИЮЛЬ 1 ЮНКУН 151 (6086) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Колхозсенче учет ӗҫне ҫирӗп йӗркелер

Колхозниксемпе колхозницӑсем Сталин юлташӑн май уйӑхӗнчи историллӗ приказне пурнӑҫа кӗртсе пырса, хӑйсен пӗтӗм вӑйне пултаруллӑхне ӗҫе хураҫҫӗ, тӑван Хӗрлӗ Ҫара [illegible] пулӑшма тӑрӑшаҫҫӗ. Кашни [illegible] колхозник, колхозница, тракторист, трактористка халӗ ӗҫре хӑйне фронтри пек тытать, [illegible] задачӑсене [illegible] ӗҫлет.

Республикӑри колхозниксем [illegible] Ҫӗмӗрле районӗнчи Ленин ячӗпе тӑракан колхоз членӗ И. Тимофеев юлташ июнӗн 15-мӗшӗ тӗлне 209 ӗҫкунӗ тунӑ. 65 ҫулти колхозник Тимофей Яковлев 206 ӗҫкунӗ ӗҫлесе илнӗ. [illegible] ӗҫ нормине 3—6 хут ирттерсе пурнӑҫласа пырать. Чкаловски районӗнчи «Хӗрлӗ Тан» колхозра Шарафутдинова юлташ звени [illegible] ӗҫ нормине куллен 200 процент тултарса пырать.

ССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ «Колхозниксен обязательнӑй [illegible] минимумне ӳстересси ҫинчен» [illegible] постановленийӗ колхозӑн ӗҫ законӗ пулса тӑчӗ. [illegible]

[illegible]

Хальхи ӳлхӗрсенчи ӗҫсен хӗрӳ вӑхӑтӗнче колхозниксем пӗтӗм вӑйне пулӑшаҫҫӗ. [illegible]

[illegible]

[illegible] ӗҫкунӗсене бригадирсем тепӗр кун ӗнтӗ лӗн шута илсе пымаҫҫӗ. Ҫакӑн пек ҫитменлӗхсене халех пӗтермелле, ӗҫкунӗсене шута илес ӗҫре большевикла йӗркелӗх тумалла.

Учет ӗҫӗнчи кадрсене хатӗрлесси республикӑри колхозсенче япӑх тӑрать. Вӗсем тапти-сыппи сӗр улшӑнса тӑраҫҫӗ. Вӑрнар районӗнчи 89 колхозра ҫак иртнӗ уйӑхсенче кӑна счетоводсем 167 ҫын улшӑннӑ. Паянхи куна татах 6 колхозра счетоводсем ҫитмеҫҫӗ. Вӑрнар районӗ 1942 ҫулта счетоводсем хатӗрлекен икӗ эрнелӗх курсран 27 ҫынна, икӗ уйӑхлӑх курсран 13 ҫынна вӗрентсе кӑларнӑ. Вӗсенчен учет ӗҫӗнче халӗ 21 ҫын кӑна ӗҫлет. Красноармейски районра та ҫакнах курма пулать. Кайри Карӑкри Калинин ячӗпе тӑракан колхоз членӗ Е. Николаева юлташ ытарласах счетоводсен курсӗнчен вӗренсе тухнӑ. Анчах вӑл колхозра счетовод пулса ӗҫлемест. Райҫӗрӗҫ пайӗ ӑна ку ӗҫре ӗҫлеттерессишӗн тӑрӑшмасть.

Нумай колхозсенче ӗҫкунӗсен кӗнекисем ҫитмеҫҫӗ. Колхозниксен аллинче ӗҫкӗнекисем ҫук пирки ӗҫкунӗсене вӑхӑтра ҫырса памаҫҫӗ. Красноармейски районра, тӗслӗхрен, учет ӗҫне туса пымалли бланкӑсем 40 колхозра пачах та ҫук. ЧАССР Наркомземӗпе районри ҫӗрӗҫ органӗсен ку тӗлӗшпе колхозсене кирлӗ пулӑшӑва халех памалла.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Июнӗн 29-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Июнӗн 29-мӗшӗнче Курск енче пирӗн войскӑсем нимӗҫсен фашистла войскисен [illegible] танксемпе тунӑ атакӑсене [illegible] сирсе пынӑ.

Фронтӑн Севастополь участокӗнче пирӗн войскӑсем противникӑн йышлӑ вӑйӗсен чылай атакисене сирсе пӑрахнӑ. Противникӑн ҫапӑҫӑва хӑйӗн ҫӗнӗ резервӗсене кӗртсе янӑ, ҫавӑнпа вӑл, пысӑк ҫухатусем тӳссе, кӑштах малалла куҫма пултарнӑ. Ҫапӑҫусем питех те хаяр пулса пыраҫҫӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче палӑрмалли улшӑнусем пулман.

* * *

Июнӗн 28-мӗшӗнче пирӗн авиаци [illegible] фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗҫсен 42 танкне, нимӗҫсен грузӗсемпе турттарса пыракан 250 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, артиллерин 3 батарейине пусарса лартнӑ, 2 прожектора ҫӗмӗрнӗ, противникӑн пехотине 3 батальона ҫити салатса янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Севастопольри боецсем паттӑррӑн хирӗҫ тӑнине [illegible] нимӗҫсен фашистла командованийӗ ҫапӑҫӑва танксемпе самолетсем нумай кӗртсе ярать. Хулана хастаррӑн хӳтӗлекенсем противник танкӗсемпе тата самолечӗсемпе тӑвакан атакӑсене сире-сире ярҫҫӗ, ӑна питӗ пысӑк ҫухатусем кӳреҫҫӗ. Кӗҫӗн лейтенант Дудник танксене хирӗҫ пемелли пӑшалтан персе нимӗҫсен 3 танкне пӗтерсе тӑкнӑ. Старши политрука Грызановскин тата 12 боеца противникӑн танкӗсем ҫавӑрса илнӗ пулнӑ. Хастарлӑ боецсем [illegible] противникӑн 3 танкне ҫӗмӗрнӗ те хӑйсен чаҫӗ патне пӗр ҫухатусӑр таварӑннӑ. Хлебников юлташ командир пулса тӑракан чаҫри зенитчиксем икӗ кун хушшинче нимӗҫсен 4 самолетне персе ӳкернӗ. Молшелидзе, Смаминян, Морозов тата Могильченко краснофлотецсем пехота хӗҫпӑшалӗнчен персе нимӗҫсен «Юнкерс—88» йышши бомбардировщикне ӳкернӗ.

Хӗвеланӑҫ фрончӗ участокӗсенчен пӗринче противник пирӗн оборонӑна танксемпе [illegible] атакӑланӑ. Противникӑн пур атакисене те сирсе янӑ. Нимӗҫсен 1.500 салтакпа офицерӗ ҫити вилнӗ.

* * *

Пирӗн соединенисенчен пӗрин позицине хирӗҫ (Кӑнтӑр-Хӗвеланӑҫ фрончӗ) гитлеровецсен танкисем чылай пысӑк ушкӑнпа янӑ. Гвардеец-танкистсем [illegible] нимӗҫсен 10 танкне пӗтерсе тӑкнӑ. Противникӑн ытти танкӗсем [illegible] часах тарса тухнӑ. Кричман юлташ командир пулса тӑракан [illegible] Гавкин юлташ командир пулса ертсе пыракан мотострелковӑй чаҫӗн боецӗсем [illegible] противник каялла чакнӑ, ҫапӑҫу хирӗнче [illegible] салтакӗсемпе офицерӗсен 500 вилли ытла выртса юлнӑ.

* * *

Артиллеристсем Кочудыков, Лавров, Васильев тата Глазырин юлашки кунсенче 18 дзотпа блиндажа ҫӗмӗрсе тӑкнӑ, 5 пулемет, пӗр миномет тата нимӗҫсен [illegible] офицерӗсене 70 ҫынна ытла пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Нимӗҫсен фашистла оккупантӗсем Брянск облаҫӗнчи партизансен пӗр отрядне ҫавӑрса илсе пӗтерсе тӑкма хӑтланнӑ. Партизансем темиҫе кун хушши [illegible] Меллӗ рубеж суйласа илсе, партизансем [illegible] атакӑланӑ та 400 оккупанта ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Орел облаҫӗнчи партизансен пӗр ушкӑнӗ, Б. юлташ ертсе пынипе, противникӑн поездне ӳпӗнтерсе янӑ. 30 грузовой автомашина, снаряд-сем тиенӗ вагон, горючи тултарнӑ 2 автоцистерна тата 150 салтакпа офицер пӗтнӗ.

* * *

Нимӗҫ ефрейторӗ Адольф Янек нумаях пулмасть Альфред Штерцик ефрейтор патне ҫапла ҫырнӑ: «...Пирӗн [illegible]

[illegible]

Нимӗҫ оккупантӗсем Чехословакири интеллигенци хушшинче массӑлла арестсем туса ирттереҫҫӗ. Гитлеровецсем ученӑйсене, профессорсене, врачсене, учительсене тӗрмесемпе концлагерьсене пере-пере чикеҫҫӗ. Гестапо студентсене ҫавӑра-ҫавӑра илсе тытса чарать. Анчах та ҫак террора пула Чехословакири патриотсем оккупантсене халиччен хинчен вӑйлӑрах хирӗҫ тӑма тытӑннӑ.

Июнӗн 30-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Июнӗн 30-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле Курск тата Севастополь енӗсенче пирӗн войскӑсем противника хирӗҫ ҫапӑҫнӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче нимӗнле улшӑнусем те пулман.

* * *

Курск енчи участоксенчен пӗринче нимӗҫсен пехоти, танксем пулӑшса пынипе, атакӑна куҫнӑ. Нищенко юлташ командир пулса ертсе пыракан пирӗн боецсем, артиллерирен персе, нимӗҫсен 15 танкне ҫӗмӗрнӗ, унтан вара штык вӗҫҫӗн тӑрса ҫапӑҫса 500 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр участокри хаяр ҫапӑҫура противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсем 2.500 ҫынна ҫити вилсе пӗтнӗ. Пирӗн авиаци активлӑн кӗрешет. Совет летчикӗсем нимӗҫсен 60 танкне, 108 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ тата сывлӑшри ҫапӑҫусенче противникӑн 25 самолетне персе антарнӑ.

* * *

Приморски армин боецӗсемпе краснофлотецсем фронтӑн Севастополь участокӗнче противникӑн хаяр атакисене сире-сире пӑрахаҫҫӗ. Старши лейтенантӑн Корлоль юлташӑн подразделенийӗ йышӑнса тӑракан позици ҫине нимӗҫсем питех те нумай авиабомбӑсем пӑрахнӑ, 10.000 снаряда ҫити кӑларса янӑ, унтан вара наступление куҫнӑ. Противник пирӗн оборонӑна татса кӗме икӗ кун хушши хӑтланса пӑхнӑ, пирӗн боецсем ӑна аркатмаллах отпор парса кӗтсе илнӗ. Хӑйсен салтакӗсемпе офицерӗсене 1.500 ҫын ытла ҫухатса, гитлеровецсем хӑйсем малтан йышӑнса тӑнӑ позицисене каялла чакса кайнӑ. Рубцов юлташӑн подразделенийӗнчи пехотинецсем противникӑн пирӗннинчен йышлӑрах вӑйӗсем тунӑ вунӑшар атакӑна сире-сире пӑрахнӑ тата нимӗҫсен пехотине 2 полка ҫити, противникӑн 11 танкне пӗтерсе тӑкнӑ, 2 бомбардировщикне персе антарнӑ. Ливанов юлташӑн батарейи тӗл персе нимӗҫсен 6 автомашинине ҫӗмӗрнӗ, нимӗҫсен пехотине 2 батальона ҫити сапаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ. Поляков юлташ командир пулса ертсе пыракан боецсен группи противникӑн тылне сӑрхӑнса кӗнӗ те унта 100 гитлеровеца ҫити пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Пирӗн артиллеристсем (Калинин фрончӗ) противникӑн пехоти пухӑнса тӑнӑ ҫӗре персе 300 гитлеровеца яхӑн пӗтерсе тӑкнӑ, противникӑн танксене хирӗҫ пемелли орудине, 17 блиндажӗпе дзотне ҫӗмӗрнӗ, боеприпассен складне сирпӗнтерсе янӑ.

* * *

Нимӗҫсен ҫӗмӗрӗлнӗ 3 танкӗ ӑшӗнче ларакан пирӗн боевой хурал ҫине противник пырса тапӑннӑ. 9 красноармеец, пӑшалсемпе пулеметсенчен персе нимӗҫсен 90 салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫакӑнта пулӑшма пынӑ пирӗн боецсен роти нимӗҫсене вӗсем малтан йышӑнса тӑнӑ позицисене каялла хӑваласа янӑ.

* * *

Витебск партизанӗсен К. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячӗ, нимӗҫсен подразделенийӗ ҫине пырса тапӑнса, 150 оккупанта пӗтерсе тӑкнӑ. Партизансен Ш. юлташ командир пулса ертсе пыракан группи 7 кун хушшинче нимӗҫсен 126 салтакӗпе офицерне вӗлерсе пӗтернӗ, противникӑн 10 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ тата темиҫе кӗпере сирпӗнтерсе янӑ.

* * *

С. тата В. районӗсенче кӗрешекен партизансем чугунҫул ҫине минӑсем хурса тухса противникӑн бронепоездне сирпӗнтерсе янӑ. Ҫав чугунҫул тӑрӑх поездсем ҫӳресси пӗр талӑка чарӑнса ларнӑ.

* * *

Аялапахра нимӗҫсен вилнӗ ефрейторӗ Эрвин Рудигер ҫумӗнче тупнӑ ҫыру кӗнекинчен уйрӑм вырӑнсене илсе пичетлетпӗр: «Вырӑссем пирӗн ҫине питех те нумай бомбӑсем килсе тӑкрӗҫ. Ҫӗнӗрен килнӗ салтаксем ухмаха ернӗ пекех чупкалаҫҫӗ, унтер-офицерсем хушнисене итлемеҫҫӗ... Темиҫе кун ӗнтӗ юн тӑкӑнакан ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Пӗтӗм Германия татӑклӑ наступлени пуҫланассине шанса кӗтсе тӑни ҫинчен офицерсем пӗрре мар каланӑ. Анчах салтаксем пачах та урӑхла калаҫаҫҫӗ: «Хӑть вунӑ наступлени пултӑр, вӗсене пирӗн хутшӑнас марччӗ кӑна».

Тин килсе ҫитнӗ почта пурне те ҫаптери пӑшӑрхантарса ӳкерчӗ. Пурин те чӗлхи ҫинче—Кельн тата Эссен. Тӑвансем хӑрушӑ япаласем ҫинчен пӗлтереҫҫӗ. Фридриха килӗнчен ҫапла ҫыраҫҫӗ: пурнӑҫ картран вӗҫерӗнчӗ, ҫынсем ҫавӑн пек хӑрушла катастрофа хыҫҫӑн ниепле те хӑйсене хӑйсем тавҫӑрса илеймеҫҫӗ».

* * *

Ужице районӗнчи (Югославия) партизансен движенине пусарма янӑ Итали салтакӗсен роти хӑйӗн офицерӗсене вӗлерсе пӗтернӗ те партизансемпе пӗрлешнӗ.

Швецин „Ада Гортон" ятлӑ пароходне путарни ҫинчен пӗлтернӗ май

Ютҫӗршывсен пичетӗнче Швецин «Ада Гортон» ятлӑ суту-илӳ пароходне Швецин территориллӗ шывӗсем ҫинче июнӗн 22-мӗшӗнче путарни ҫинчен пӗлтернӗ майпа Швецире ҫав асӑннӑ парохода Совет Союзӗн подводнӑй лодки торпеда ярса путарнӑ тесе калаҫма тытӑннӑ.

ТАСС илнӗ сведенисем тӑрӑх, совет органӗсем тӗрӗслесе тухнӑ хыҫҫӑн ҫавӑн пек калаҫни тӗрӗс марри паллӑ пулса тӑнӑ. Ҫакӑнпа пӗрлех ССР Союзӗн тинӗс-ҫар влаҫӗсем Совет Союзӗн ҫар суднисене нейтралитет тытакан Швецин территориллӗ шывӗсен чиккисене ҫирӗппӗн пӑхӑнса тӑма татах та тепӗр хут кӑтарту панӑ.

Тӗрӗслевӗн ҫӳлте кӑтартса панӑ результачӗсем ҫинчен тата Совет Союзӗн ҫар карапӗсене панӑ кӑтартусем ҫинчен Швеци правительствине официальнӑй йӗркепе пӗлтернӗ. (ТАСС).

ТАСС опроверженийӗ

Германи агентстви пӗлтерӳ сарнӑ, ҫав пӗлтерӳ тӑрӑх «советӑн хӗҫпӑшаллӑ ланнӑ бомбардировщикӗсем» Турци территорийӗ ҫине анса ларнӑ иккен, вӗсен хисепӗ те 9, те 12, тӗплӗн паллӑ мар пулать. Ҫак пӗлтерӳ пуҫран шухӑшласа кӑларнӑ элек пулса тӑрать, унӑн провокациллӗ тӗллевӗ уҫҫӑнах курӑнса тӑрать.

—o—

Выльӑх-чӗрлӗхсем валли витесем тӑваҫҫӗ

Туҫи-Чуринкӑри «Правда» колхоз (Шӑхасан р.) СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ колхозсемпе совхозсенче ҫамрӑк выльӑхсене сыхласа усрамалли тата выльӑх-чӗрлӗх хисепне ӳстермелли мерӑсем ҫинчен йышӑннӑ постановлени сӳтсе-явнӑ хыҫҫӑнах выльӑх-чӗрлӗхсем валли ӑшӑ витесем хатӗрлеме тытӑнчӗ. Паянхи куна 45 пуҫ ӗне валли вите туса пӗтернӗ, сысна витисене ремонтлама тытӑннӑ.

Н. ПАВЛОВ.

Боецсем валли ӑшӑ тумтирсем

ШАХАСАН. Ҫак кунсенче Ҫӗнӗ Пинерти «Пинер» колхозра пуху пулса иртрӗ. Пухура колхозниксемпе колхозницӑсем Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли ӑшӑ тумтир пухас ыйтӑва сӳтсе-яврӗҫ.

Часах ӗҫе тытӑнчӗҫ. Паянхи куна 32 тир, 6 мӑшӑр алшиш, 5 мӑшӑр чӑлха, 6 алшӑлли, 7 простыня пухса хатӗрленӗ.

Колхозниксем С. Варфоломеев 2 тир, 50 тенкӗ укҫан, М. Кузьмина пӗр тир, пӗр алшӑлли, пӗр мӑшӑр чӑлха, А. Петрова пӗр тир, пӗр алшӑлли панӑ.

«Пинер» колхоз хӑй 14 килограмм ҫӑм панӑ.

Ҫав пухурах колхозниксем самолетсен «Осоавиахим Чувашии» ятлӑ звенине тума 1.500 тенкӗ укҫа пухса пачӗҫ.

А. ОРЛОВ.

Улӑх утине ҫулма тытӑннӑ

ҪӖМӖРЛЕ. Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз утӑ ҫулма тухрӗ. Утӑ ҫулнӑ ҫӗрте 40 ҫын ӗҫлет. Паянхи куна пурӗ 30 гектар утӑ ҫулнӑ. Колхозниксем ӗҫлес хастарлӑхӗ пысӑк.

Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫре пысӑк тухӑҫлӑхпа тата лайӑх пахалӑхпа ӗҫленӗшӗн, ВКП(б) райкомӗсемпе ӗҫҫынни депутачӗсен районсенчи Совечӗсен исполкомӗсем тӑратнӑ тӑрӑх, ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен республикӑри Хисеп хӑми ҫине кӗртнӗ:

141. **Евдокия Степановна Комиссарова** юлташ—Сӗнтӗр районӗнчи «Новый путь» колхозри телятница. Комиссарова юлташ телятница пулса 1934 ҫултанпа ӗҫлет. Унтанпа вӑл ӗнесенчен 185 пӑру ытла илсе 6 уйӑх тултариччен пӑхса ӳстернӗ. 1941 ҫулта вӑл 24 пӑру пӑхса ӳстернӗ, кашнинех 6 уйӑх тултариччен пӑхнӑ. Ҫав пӑрусем, вӑтамӑн илсе шутласан, кунсерен 651 грамм хушӑнса пынӑ. Комиссарова юлташ 1941 ҫулта 813 ӗҫкунӗ тунӑ.

142. **Василий Игнатьевич Воронцов**—Йӗпреҫ районӗнчи Н. К. Крупская ячӗпе тӑракан колхозри утарӑн заведующийӗ. Воронцов юлташ хурт-хӑмӑр ӗҫӗпе 1933 ҫултанпа ӗҫлет. Вӑл ӗҫлеме пуҫланӑ чухне утарта хурт мӗнпурӗ те 14 вӗлле кӑна пулнӑ. Халӗ 258 вӗллене ҫитнӗ. Вӑтамӑн шутласан, Воронцов юлташ ҫулсерен кашни вӗллерен 32 килограмм пыл илнӗ, уйрӑм ҫулсенче 85 килограма ҫити илни те пулнӑ. 1941 ҫулта вӑл, вӑтамӑн шутласан, кашни вӗллерен 42 килограмм пыл тата 0,8 килограмм карас илнӗ. Воронцов юлташ ӗҫлеме пуҫланӑранпа утарта хурт пӗр вӗлле те пӗтни пулман. Воронцов юлташ Пӗтӗм Союзри Ялхуҫалӑх Выставкин участникӗ, малта пыракан лайӑх утарҫӑсен хисепне кӗртсе, ӑна Пӗчӗк кӗмӗл медаль парса наградӑланӑ. 1941 ҫулта Воронцов юлташ 730 ӗҫкунӗ тунӑ.

Белоруссин халӑх поэчӗ Янка Купала вилни

Белорусси ССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ, Белорусси ССР Верховный Совечӗн Президиумӗ тата Белоруссири Коммунистсен (большевиксен) Партин Центральный Комитечӗ Белоруссири халӑх поэчӗ, БССР Верховный Совечӗн депутачӗ, паллӑ обществӑллӑ деятель, академик Янка Купала (Иван Доминикович Луцевич) вилни ҫинчен тарӑннӑн хурланса пӗлтереҫҫӗ.

БССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ.
БССР Верховный Совечӗн Президиумӗ.
Белоруссири Коммунистсен (большевиксен) Партин Центральный Комитечӗ.

Гитлерла командованин татах тепӗр суя элекӗ

Июнӗн 28-мӗшӗнче Гитлерӑн ставки ҫут тӗнчене татах тепӗр черетлӗ элек кӑларса янӑ. Ку расра фашистла ҫыравҫӑсем хут ҫинче сахал та мар, нумай та мар, пирӗн 3 армие: 2-мӗш ударнӑй армие, Волхов фронтӗнчи 52-мӗшпе 59-мӗш армисене «пӗтерсе тӑкнӑ», ҫав армисене нимӗҫсем малтан Волхов юханшывӗн хӗвеланӑҫ ҫыранӗнче хупӑрласа илнӗ пулать вара. Ҫак элеке сарнӑ чухне гитлерла ҫыравҫӑсем, 30.000 ҫын тыткӑна илнӗ тесе тата вилнисен хисепӗ тыткӑна илнисен хисепӗнчен нумай хут иртсе каять тесе, питех те ӳстернӗ цифрӑсем илсе кӑтартаҫҫӗ. Паллах ӗнтӗ, ҫак гитлерла черетлӗ элек фактсемпе нимӗн чухлӗ те килӗшсе тӑмасть.

Кӑҫалхи февраль уйӑхӗнче пирӗн 2-мӗш ударнӑй арми нимӗҫсен оборонине татса питӗ те шала кӗрсе кайрӗ, нимӗҫсен фашистла войскисен пысӑк вӑйне хӑй еннелле ҫаварчӗ, хӗллехи тата ҫуркуннехи вӑхӑтсенче противника хирӗҫ вӑйлӑ ҫапӑҫусем туса пырса ӑна пысӑк ҫухатусем тӳстерчӗ. 2-мӗш ударнӑй армин коммуникацийӗсене татса тухас тесе противник нумай хут хӑтланса пӑхрӗ, анчах кашни хутӗнчех, пысӑк ҫухатусем тунӑ хыҫҫӑн, унӑн ирӗксӗрех чакмалла пулчӗ. Июнӗн малтанхи кунӗсенче нимӗҫ войскисем 2-мӗш ударнӑй армин коммуникацийӗсем ҫине пӗр вырӑнта шӑтарса кӗме пултарчӗҫ. Хӗвелтухӑҫ енчен 59-мӗшпе 52-мӗш армисем пӗрле тата хӗвеланӑҫ енчен 2-мӗш ударнӑй арми пырса ҫапнипе пула противникӑн чаҫӗсене, 2-мӗш ударнӑй армин коммуникацийӗсем ҫине кӗрсе кайнӑскерсене, нумайӗшне пӗтерсе тӑкнӑ, вӗсен юлашкийӗсене вара малтанхи позицисем ҫине хӑваласа янӑ. Ҫав ҫапӑҫусем пынӑ вӑхӑтра нимӗҫсен чӗрӗ вӑй енӗпе те, техника енӗпе те пысӑк ҫухатусем пулнӑ. Туллимар даннӑйсем тӑрӑх, нимӗҫсен ҫав ҫапӑҫусенче, вилнисене кӑна шутласан та, 30.000 ҫынран сахал мар пӗтнӗ. Вӑл ҫапӑҫусенче 1, 126, 254, 285, 291-мӗш пехотнӑй дивизисем, полицин «СС» дивизийӗ тата ютҫӗршывсен «Нидерланд» тата «Фландрия» ятлӑ легионӗсем уйрӑмӑнах пысӑк ҫухатусем тӳснӗ, полицин «СС» дивизийӗпе ютҫӗршывсен легионӗсене пӗтӗмӗшпе пекех пӗтерсе тӑкнӑ.

2-мӗш ударнӑй армин чаҫӗсем малтанах хатӗрленӗ рубежа чакнӑ. Ҫав ҫапӑҫусенче пирӗн 10.000 ҫынна ҫити вилнӗ, 10.000 ҫынна яхӑн пӗр хыпарсӑр ҫухалнӑ, 102 оруди, 12 танк тата 200 пулемет пӗтнӗ. Ҫапла вара, 2-мӗш ударнӑй армине пӗтерсе тӑкни ҫинчен нимӗнле сӑмах та пулма пултараймасть. 52-мӗшпе 59-мӗш армисене илес пулсан вара, вӗсене нимӗҫсен оборонине шӑтарнӑ вырӑна илсе кӗмен тата вӗсен коммуникацийӗсем ҫине противник пырса кӗреймен. Пачах урӑхла, ҫак армисем противникӑн войскисене, 2-мӗш ударнӑй армин коммуникацийӗсем ҫине кӗрсе кайнӑскерсене, вӑйлӑн пыра-пыра ҫапнӑ тата 2-мӗш армин чаҫӗсене ҫӗнӗ рубежа илсе тухма пулӑшса пынӑ.

Гитлерла черетлӗ элеке пӗтӗмӗшпех сирсе пӑрахакан фактсем ҫакӑн пек ӗнтӗ.

СОВИНФОРМБЮРО.

ОБЯЗАТЕЛЬСТВӐСЕНЕ ПУРНӐҪЛАСА ПЫРАТПӐР

Ҫӗмӗрле комбинатӗнче рабочисемпе работницӑсем пӗтӗм ӗҫе фронт интересӗсемшӗн туса пыма тӑрӑшаҫҫӗ. Вӗсен шухӑш-кӑмӑлӗ пӗрре—стахановла ӗҫленипе хамӑрӑн тӑван Хӗрлӗ Ҫара ҫӗнтерӳ тума пулӑшасси. Ҫак шухӑш-кӑмӑлпа вӗсем Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнчӗҫ, планран ирттерсе фронт валли продукци туса кӑларма пулчӗҫ.

Комбинат коллективӗ хӑйӗн обязательствисене халӗ тивӗҫлӗн пурнӑҫласа пырать. Май уйӑхӗнче вӑл производство планне ирттерсе тултарнӑ, ӗҫ тухӑҫлӑхне 17 процент ӳстернӗ. Рабочисемпе работницӑсем июнь уйӑхӗнче те хӑйсем ҫине илнӗ обязательствӑсене пур кӑтартусем енӗпе те ӑнӑҫлӑн пурнӑҫларӗҫ. Цехпа цех, сменӑпа смена, бригадӑпа бригада, рабочипе рабочи тунӑ договорсене эпир татӑшах тӗрӗслесе тӑратпӑр, результатсене кӑтарту хӑмисем ҫине ҫыратпӑр, вӗсем ҫинчен канашлусенче калатпӑр. Ҫакӑ вӑл кайра пыракансене ытларах вӑя хурса ӗҫлеме пулӑшать. Хальхи вӑхӑтра нормӑна тултарайман рабочисем ҫукпа пӗрех ӗнтӗ. Новохатный юлташ начальник пулса ертсе пыракан цехра мастерсем, квалификациллӗ рабочисем те, нормӑна тултарайманнисене шефа илсе, вӗсене техникӑна алла илме вӗрентнӗ.

Коллективра стахановецсен хисепӗ ӳссе пырать. Паянхи куна кашни цехрах двухсотниксемпе трехсотниксем вуншарӑн шутланаҫҫӗ. Назаров юлташ начальник пулса ӗҫлекен цехра, акӑ, пӗтӗм рабочисен хисепӗнчен ҫурри ытла стахановецсем. Стахановец И. Прокопьев юлташ апрель уйӑхӗнче ӗҫ нормине 246 процент, май уйӑхӗнче 382 процент тултарнӑ, халӗ куллен 3—4 норма туса пырать. Столяр И. Киселев та ӗҫ тухӑҫлӑхне иккӗ ҫурӑ хут ӳстерчӗ. Новохатный юлташ начальник пулса ӗҫлекен цехри малярсем Комиссарова, Краснова, Гаврилова юлташсем апрель уйӑхӗнче хӑйсен ӗҫ нормисене 231 процент, май уйӑхӗнче 250 процент тултарса ӗҫленӗ. Июнь уйӑхӗнчи результатсем вӗсен татах та пысӑкрах. Иванов юлташ начальник пулса ертсе пыракан цехри Болонина бригади плана, май уйӑхӗнче 228 процент, июньре—250 процент ытла тултарнӑ.

Социализмлӑ ӑмӑрту сарӑлса пырать, вӑл кунран-кун, уйӑхран-уйӑха ҫӗнӗ, лайӑхрах результатсем парать. Комбинат коллективӗ виҫҫӗмӗш кварталта ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем тӑвассишӗн кӗрешет.

К. ДМИТРИЕВ.
Ҫӗмӗрле Комбинатӗнчи завком председателӗ.

ГОСУДАРСТВӐНА ҪӖРУЛМИ ПАРАҪҪӖ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Районри кӑшт пӗр колхозсем государствӑна 1942 ҫулти обязательство шучӗпе ҫӗрулми параҫҫӗ. Кудемерти «Коммунизм» тата Чӗнерти Тимошенко ячӗпе хисепленекен колхозсем ҫак кунсенче 30—40-шер центнер ҫӗрулми леҫсе пачӗҫ.

В. ТРОФИМОВ.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Пирĕн земляксем

Хăюллă танкист

Леонид Скворцов çирĕм çултан иртнĕ. Анчах унăн пурнăçĕнче асран тухми кунсем сахал мар пулнă.

Вăл чăваш, Сĕнтĕр районĕнчи Ирçей ялĕнче çуралнă. 1936 çулта Иваново-Вознесенск хулинче плановс-экономически техникумран вĕренсе тухнă. Шкул ăна ĕçлеме вĕрентнĕ. Леонид Скворцов пĕр çул хушши - экономист пулса Сĕнтĕр районĕнчи план комиссинче ĕçленĕ.

1937 çулта унăн ĕмĕчĕ пурнăçа кенĕ, вăл чи хисеплĕ те чыслă ĕçе тума — тăван çĕршыва сыхлама Хĕрлĕ Çар ретне тăнă. Леонид Скворцов Хĕрлĕ Çарта политикăллă аслă шкул витĕр тухнă: тăшмана хирĕç паттăррăн та хăюллăн çапăçакан çын пулса ÿссе çирĕпленнĕ. Хĕрлĕ Çарта хăйĕн пĕлĕвне, шултарулăхне ÿстерсех пынă. Юратнă тăван Ирçей ялне Леонид Скворцов танковăй войскăсен кĕçĕн лейтенанчĕн званине илсе таврăннă.

Нимĕç фашисчĕсем пирĕн тăван çĕршыв çине тапăнсан, çирĕп чĕреллĕ танкист Леонид Скворцов хăй ирĕкĕпе Действующи армине кайнă. Çапăçу хирĕнче хăйĕн йывăр танкĕпе вăл нимĕç вăрă-хурахĕсене сахал мар таптаса лучăрканă. Противникăн техникине, чĕрĕ вăйне нумай пĕтернĕ.

Фронтăн Хĕвеланăç участокĕнче Хĕрлĕ Мускавшăн хаяр çапăçусем пуçланнă. Леонид Скворцов ертсе пыракан танковăй экипажа командовани боевой задани панă. Пехота йышĕнса илнĕ çĕнĕ рубежа çирĕплетсе çитериччен противника сирсе тăмалла. Тăшманăн автоматчикĕсем те, пулеметчикĕсем те паттăр хĕрлĕ пехотинецсене нимех те тăвайман. Нимĕç командованийĕ вара броньăллă танкĕсемпе çав рубежа каялла туртса илме шутланă. Рубеж патнелле 10 танк кĕмсĕртетсе пынă. Пехотинецсен хăйсем çумĕнче гранатăсем çеç пулнă, çавăнпа та Леонид Скворцовăн танковăй экипажĕн нумай ĕçлеме тивнĕ.

— Тăван çĕршывшăн! Аслă Сталиншăн! — тесе Леонид Скворцовăн экипажĕ çапăçăва кĕнĕ. Çапăçу нумай вăхăт хушши пынă. Харсăр экипаж нимĕç танкĕсене пехотинецсем сыхласа тăракан рубеж патне яман, тăшман танкĕсене стройран кăларса пынă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен 4 танкĕ çĕмĕрĕлсе ларса юлнă, ыттисем каялла тарнă.

Хăюллă танкист Леонид Скворцов командованин боевой заданийĕсене пурне те вăхăтра пурнăçланă. Çапăçура пĕр утăм та каялла чакман. Мĕншĕн тесен хыçра — Хĕрлĕ Мускав, Мускав хулинче Ленинăн ĕçне малалла туса пыраканĕ, ĕçхалăхĕн çулпуçĕ, аслă полководец Иосиф Виссарионович Сталин.

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан вăрçă фронтĕнче командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çапăçура паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн Леонид Миронович Скворцов юлташа Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ парса награтланă.

Г. АКИМОВ.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕ). Ÿкерчĕк çинче: Танксене пĕтерекен гвардеецсем танксене хирĕç пемелли пăшала вĕренеççĕ. Вĕрентекенĕ—М. Я. Лямцов (сулахайран виççĕмĕш).
Г. ДРУЖЕЛЮБОВПА А. НЕСТЕРОВ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Командирăн юлашки приказĕ

КĂНТĂР-ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, июнĕн 26-мĕш. **(ТАСС спецкорĕ).** Танксем килеççĕ! — тесе пĕлтернĕ кĕскен сăнавçă, бинокольпе пăхма пăрахмасăр.

— Танксен атакине сирсе пăрахма хатĕрленĕр!—тесе приказ панă.

Батарейăн оруди расчечĕсем çапăçма хатĕрленсе шăп тăнă. Вуншар танк батарея патнелле пынă. Машинăсен кÿлеписем çинче совет лозунгĕсене ахаль куçпах курма пулнă.

Анчах çакă вăл гитлеровецсен череллĕ провокацийĕ пулса тăни пирки чăсах пĕри те иккĕленмен. Çав машинăсем хăйсен формипе совет машинисем пек маррине командир вăхăтра асăрхаса илнĕ. Нимĕçсем хăйсен танкĕсене урăхла сăрласа хунă, çапла майпа вĕсем пирĕн боецсене улталама шутланă.

Пирĕннисем нимĕç танкĕсене 200 метр çывăха янă та, çакăн пек команда янăраса кайнă:

—Фашистсене тÿррĕн тĕллесе... огонь!

Пĕтĕм батарея шавласа кайнă. Командир пĕр оруди патĕнчен теприн патне пынă, хавхалантарнă, кăтартусем панă, тан мар çапăçăва хастарлăн ертсе пынă. Орудисен наводчикĕсем, орудисене авăрлакансем, снарядсем илсе пыракансем — пурте: вилсе выртар, анчах та тăшмана ярар мар, тенĕ.

Фашистсен пĕр танкне вут хыпса илнĕ, тепĕр танкĕ тайăлса кайнă.

Анчах совет паттăрĕсен пĕчĕк ушкăнĕ те сайралса пынă. Пуля наводчик Морозова персе ÿкернĕ, Гурьев, Овечкин, Гурьянов, Водолазов боецсем вилсе выртнă. Снаряд ванчăкĕ батарея командирне йывăр амантнă. Унăн юн палкаса юхнă, анчах вăл çапăçăва çаплах ертсе пынă. Совет артиллерисчĕсен кашни снарячĕ тĕл пырса лекнĕ.

Командирăн пичĕ вилекен çыннăнни пек шуралса кайнă. — Кирек мĕн пулсан та каялла ан чакăр! — тесе янăраса тухнă унăн юлашки сăмахĕсем.

Л. РОЗОВ.

Пултаруллă медсестра

Рындинăри «Новая жизнь» ялхуçалăх артелĕн членĕ Романов Гурий Григорьевич хăйĕн хĕрĕ сестра пулса ĕçлекен госпиталĕн командованийĕнчен çакăн пек çыру илнĕ:

«Хисеплĕ Гурий Григорьевич! Госпитальрен сывалса тухакан кашни боецах, пулеметчик-и вăл, артиллерист-и, минометчик-и, е вăл пирĕн геройла Хĕрлĕ Çарăн пĕр-пĕр чаçĕн командирĕ-и, кирек кам пулсан та — санăн Вера ятлă хĕрна нихăçан асран ямĕ. Санăн хĕрÿ — мухтава тивĕçлĕ медсестра. Вăл аманнă боецсене сыватас ĕçре врачсене пулăшнипе çеç çырлахмасть, вăл госпитальри пур ĕçсене те активлăн хутшăнать.

Вера Гурьевна хастарлă хĕр. Вăл вуншар аманнă боецсен çухалнă пурнăçне таврăрса панă. Вĕсене вăл врачсем панă эмельпе çеç мар сыватать, çав эмельсем çумне вăл тата совет çыннине тивĕçлĕ ăшă кăмăл хушать, çакă ĕнтĕ боецсене хăвăртрах сывалма пулăшать. Веруша (çапла чĕнеççĕ ăна госпиталь работникĕсемпе боецсем) врачсен рецепчĕсем çумне хăйĕн мĕн пур вăйне, пĕлÿлĕхне хушнă. Вăл тăван çĕршывшăн, боецсен пурнăçĕшĕн тăрăшнине шута илсе, госпиталь командованийĕ ăна госпиталĕн хисеп хăми çине кĕртрĕ. Сире, Гурий Григорьевич, госпиталь командованийĕ çавăн пек мухтава тивĕçлĕ хĕр пăхса çитĕнтернĕшĕн, мухтавлă ĕçпе кĕрешÿре хастарлăн кĕрешекен, вуншар боецăн пурнăçне çăлса хăваракан хĕр пăхса çитĕнтернĕшĕн чĕререн тав тăвать. Гурий Григорьевич, эпир сана шантарсах калатпăр, вырăс халăхĕ нихăçан та чура пулман, пулас та çук.

Санăн аллуна çирĕппĕн чăмăртатпăр.

Госпиталь Комиссарĕ — ГРЖИАНСКИЙ».

ВЛКСМ Шупашкар хула Комитечĕн V-мĕш пленумĕ

Июнĕн 29-мĕшĕнче ВЛКСМ Шупашкар хула Комитечĕн V-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ.

Пленум икĕ ыйту — социализмлă ăмăртăва сарса ярас тĕлĕшпе комсомолăн хулари организацийĕсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен тата организациллĕ ыйтусем сÿтсе-яврĕ.

Пĕрремĕш ыйтупа ВКП(б) Хула Комитечĕн промышленность енĕпе ĕçлекен секретарĕ Волков юлташ доклад туса панĕ.

Докладчик Шупашкар хулинчи промышленность тăван çĕршыв валли кирлĕ çар хатĕрĕсене уйăхсерен ытларах туса кăларни çинчен, ку тĕлĕшпе комсомолăн хăшпĕр организацийĕсем ĕçе тивĕçлипех тытăнни çинчен каларĕ.

Хулари предприятисене пĕтĕмпе пĕрле илсен, продукци туса кăлармалли май уйăхĕнчи плана 104 процент пурнăçланă. Халĕ предприятисенче пуринче те тенĕ пекех социализмлă ăмăрту сарăлса пырать. Заводсемпе фабрикăсем уйăхри плана ытлашшипех тултарма, кашни рабочи ĕç тухăçлăхне ÿстерме тата çунтармалли япаласене перекетлеме пулса обязательствăсем илеççĕ.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура мала тухассишĕн электроаппаратура завочĕ аван ĕçлерĕ. Юлашкинчен, вăл ВЦСПС-па пĕр Промышленность Халăх Комиссариачĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне тата 1.800 пин тенкĕ премине илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Заводра ĕçлекен рабочисенчен 56 процентĕ çамрăк рабочисем. Вĕсем отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче станоксем умне тăнă. Çамрăк рабочисене вĕрентес, ĕçе хăнăхтарас тĕлĕшпе комсомолăн заводри организацийĕ тăрăшса ĕçлет. Ритманский, Жолотова тата ытти комсомолецсем 3—4-мĕш разрядпа ĕçлеме тытăнчĕç. Комсомол организацийĕ союзра тăман çамрăксемпе таччăн çыхăнса тăрать. Çавăнпа унăн йышĕ те кулленех ÿсет.

Заводра çĕршер комсомолец, вĕсенчен 68 стахановец. 10 çын нормăна 200 процентран та ытларах тултараççĕ. Комсомолка Данилова юлташ завода нумаях пулмасть кĕнĕ. Халĕ вăл чи лайăх стахановкăсенчен пĕри. Ăна Чăваш АССР Верховный Совечĕ Хисеплĕ грамотăпа награтланă.

Юлашки вăхăтра комсомолăн тепĕр заводри организацийĕ те хăйĕн ĕçне чылай аванлатрĕ. Комсомолецсем пурте тенĕ пекех нормăсене тултараççĕ. 13 комсомолец сменăра 2—3-шер норма тултарса ĕçлеççĕ.

Комсомолăн пир-авăр тĕртекен тата чăлха çыхакан фабрикăсенчи организацийĕсем те начар мар ĕçленине палăртмалла.

Анчах хулари хăшпĕр предприятисем çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. Комсомолăн унти организацийĕсем те хăйсен тивĕçлĕ вырăнне йышăнайман. Сăмахран, Водопьянов ячĕпе тăракан комбинат май уйăхĕнчи плана нумай тултарайман. Ленин ячĕпе тăракан фабрикăпа «Красный кустарь» артель те начар ĕçлеççĕ.

Ленин ячĕпе тăракан фабрикăра 132 рабочирен 55 çын нормăсене тултараймаççĕ. Чăн та, ку фабрикăра нормăна ытлашшипех тултаракан рабочисем те пур. Анчах вĕсем ĕçлени нормăна тултарайманнисен вырăнне кăна каять. Çапла вара фабрика май уйăхĕнчи плана тултарайман. Халĕ, социализмлă ăмăртăва хутшăннă хыççăн, кашни рабочие нормăна тултарса ĕçлеттермелле тăвас пулать. Çавăнпа тин çеç ĕçе кĕнĕ рабочисене хăйсен профессине лайăх вĕрентсе çитерессишĕн тăрăшмалла. Хулари çакăр комбинатĕнче рабочисенчен çурри ытла вăрçă кунĕсенче ĕçлеме тытăннă. Вĕсенчен 100 çынна яхăн 16—25 çулсенчи çамрăксем шутланаççĕ. Çав çамрăксене лайăх квалификаци парас тĕлĕшпе ытларах ĕçлемелле, ятарласа стахановла шкулсем, техминимум кружокĕсем уçмалла, рабочисене уйрăмăн та вĕрентмелле. Паллах, вĕренес тата ĕçлес тĕлĕшпе комсомолецсен хăйсен пример кăтартса пымалла.

«Кожупряжь» артельре Васильева комсомолка нормăна 56 процент кăна тултарать. Кун пек примерсене хутранситрен ытти предприятисенче те тĕл пулма пулать. Социализмлă ăмăртура комсомолецсем малта, союзра тăман çамрăксене ертсе, вĕрентсе пыма тивĕçлĕ. Комсомолецсене кайра пыни килĕшмест.

Халĕ кашни предприятирех обязательствăсем илеççĕ, договорсем тăваççĕ. Анчах çав обязательствăсем пысăк цифрăсем кăна мар, чăн-чăн ĕçре пурнăçламалли обязательствăсем пулчăр. Вĕсене тăтăшах тĕрĕслесе пымалла. Тĕрĕсленĕ чухне сменăра 2—3-шер норма тултарса ĕçлекенсене çеç мар, вăтам тата кая юлса пыракансене те палăртмалла, вĕсене тивĕçлипе пулăшмалла. Кашни рабочи нормăна тултартăр. Çавăн чухне тин предприятисем плана тултаракан пулĕç.

Юлашкинчен докладчик социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ярас тĕлĕшпе комсомол организацийĕсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен чарăнса тăчĕ.

Доклад тăрăх Козиенко («Кожупряжь» артелĕ), Трусова, Моисеева (пир-авăр фабрики),Васильева (кирпĕч завочĕ), Конецкая (тех-ткацки фабрика), Шигаева (7-мĕш номерлĕ шкул), Савельева (партстационар), Филиппов (НКВД), Кузина (детсад), ВЛКСМ хула комитечĕн секретарĕ Охандерова, ВЛКСМ Обком секретарĕ П. Михайлов юлташсем тухса калаçрĕç.

Пленум комсомол организацийĕсен ăмăртăва мĕнле ертсе пымаллине кăтартса тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

Организациллĕ ыйтупа пленум хула комитечĕн çарпа физкультура енĕпе ĕçлекен секретарĕ пулма И. Филиппов юлташа çирĕплетсе хăварчĕ.

Самолетсен „Осоавиахим Чувашии“ звенине тума

СОВЕТСКОЕ. Ишлей районĕнчи хĕрарăмсен çар ĕçне вĕренекен подразделенийĕ самолетсен «Осоавиахим Чувашии» ятлă звенине тума укçа-тенкĕ пухма чĕнсе каланине Турайри тулли мар вăтам шкулта вĕренекенсем пысăк хаваслăхпа ырларĕç. Чĕнĕве сÿтсе-явнă хыççăн, вĕсем самолетсен звенине тума 400 тенкĕ укçа пухса пачĕç. А. Михеев, А. Беляев, И. Константинова вĕренекенсем 15-шер тенкĕ, Д. Красавина 10 тенкĕ, З. Соловьева, Н. Степанов вĕренекенсем 5-шер тенкĕ пачĕç.

М. СТЕПАНОВА.

* * *

ЧКАЛОВСКОЕ. Районри ĕççыннисем самолетсен «Осоавиахим Чувашии» ятлă звенине тума банка 95.571 тенкĕ укçа хывнă. Вăл шутран: «Октябрь ялавĕ» колхоз 4.455 тенкĕ, «Нариман» колхоз — 4.117 тенкĕ, «Çăлтăр» колхоз — 5.060 тенкĕ панă. МТС-ра ĕçлекенсем хăйсем çеç 11.210 тенкĕ пырса леснĕ. Уйрăм çынсем: Елетин тракторист 100 тенкĕ, Енилихин, М. Потапова 40-шер тенкĕ, 1-мĕш бригадăн бригадирĕ Пыркин 500 тенкĕ панă. Самолетсен звенине тума кашни тракторнăй бригадăрах пиншер тенкĕрен кая мар пухнă.

Кив Ахпÿртри «РОКК» колхозра 6.643 тенкĕ пухăннă. Кошкина, Соловьев, Еливанова колхозниксем 200-шер тенкĕ панă.

Укçа пухас ĕç районра малалла пырать.

—o—

Паха йĕтĕншĕн

ÇĔМĔРЛЕ. «Красноармеец» колхоз кăçал 80 гектар йĕтĕн акса хăварнă. Тухăçлă йĕтĕн туса илессишĕн колхозниксем тăрăшса ĕçлеççĕ. Июнĕн 15-мĕш тĕлне йĕтĕне çумкурăкĕсенчен пĕр хутчен çумланă, халĕ тата тепĕр хут çумлаççĕ тата аммиак селитрипе апатларĕç. Йĕтĕн кĕскерех çитĕннĕ вырăнсене суйласа тислĕк шĕвекĕпе апатлантараççĕ. Çаксем йĕтĕне хăвăрт та пĕр тикĕс ÿсме май параççĕ. Йĕтĕнĕн çÿллĕшĕ халĕ 75—80 сантиметра çитнĕ. Йĕтĕн тăвакансен бригадине Чăваш АССР Верховный Совечĕн депутачĕ Анисия Семеновна Чекменева юлташ ертсе пырать

П. СЕРГЕЕВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Ĕç фрончĕ

1. Çÿллĕ ыраш хумханать

Кунта та фронт. Артиллери батарейисем кĕрлени те, пульăсем шăхăрса иртни те, снарядсем çурăлни те илтĕнмест кунта. Çил те тар шăршине вĕçтерсе килмест. Кунта лăпкă, вăрçă сасси илтĕнмест. Хирте тинĕс тейĕн, этем çÿллĕш ыраш хумханать. Пăрçасем чечеке лараççĕ...

Анчах Ахпÿртри Сталин ячĕпе тăракан колхоз çĕрĕ çине кĕрсенех туятăн: кунта та фронт! Çакă вăл ирхи çĕртме тăвакан тракторсен моторĕсем хăвăрт ĕçлениче, колхозниксемпе колхозницăсем—пиллĕкмĕш класран вĕренсе тухнă Александр Толстовран пуçласа утмăл çичĕ çулти Герасим Михеевич Михеев мучи таранах—пур ĕçре те пĕр çын пек пысăк хастарлăхпа пархатарлăн ĕçлениче сисĕнет.

Колхоз çуракине ăнăçлăн вĕçленĕ. Сывăрмасăр, канăça пĕлмесĕр ирттернĕ çурхи кунсем сая каймарĕç, кĕçех тулă пучахланать, хура тулă чечеке ларать. Пахчасенче çимĕçсем паркан ÿсеççĕ. Хамăрăн паттăр çарпа тăван çĕршыв валли кăçал ытлăн-çитлĕн тырпул, пахча-çимĕç пулать.

Колхозăн уйхирĕ çинчен куçа илес килмест. Тÿлек çил шăркана ларнă ыраш пучахĕсене пыра-пыра çупăрлать. Кăтра пучахсем çÿлелле кармашаççĕ, тем талккишех сарăлса выртакан хир тăрăх тинĕс хумĕсем васкавлăн чупаççĕ. Лере, Пăва çыранĕн тепĕр енче, Григорий Уруков бригадинчи колхозниксем люцерна пуçтараççĕ. Иван Мешковпа Анна Петухова ăна çиййĕнчех лавсем çине тиесе капан тăвакансем патне турттараççĕ. Ырă шăршăллă люцернăна урапа çине тиенĕ, е капана хывнă чухне колхозниксем мĕн çинчен калаçаççĕ тетĕр эсир?

— Ку хамăрăн Хĕрлĕ Çарăн учĕсем валли питех те сĕтеклĕ утă. Кăна капана хывичченех заготпункта леçесчĕ... теççĕ вĕсем.

Люцерна çулакансем Иринăпа Мария Уруковăсем, Еленăпа Агафия Парадовăсем те çакăн çинченех шутлаççĕ. Вĕсем: ку—чаплă кавалеристсен учĕсемпе хамăр колхозри лашасем валли,—тесе çависене лапатқаланă, унтан тарланă пичĕсене шăлса типĕтнĕ те каллех çĕнĕ пакуса тăнă. Паттăр хĕрарăмсем виçĕ гектар люцернăна икĕ кун çурăра çулса пĕтернĕ. Çапла кунне 4—5-шер ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ.

Иккĕмĕш бригадăра ĕçлекен Пелагея Синеева, Акулина Козлова тата Герасим Михеев колхозниксем çинчен пурте мухтаса калаçаççĕ. Герасим Михеевич Михеев иртнĕ çул хăй пĕччен 462 ĕçкунĕ тунă. Кăçал тунă ĕçкунĕсем унăн 200. Икшер пĕчĕк ачаллă колхозницăсем Козловăпа Синеева кăçал 50—60 ĕçкунĕ тума ĕлкĕрнĕ. 64 çулти Анастасия Каштанова, иртнĕ çулта 124 ĕçкунĕ тунăскер, кăçал та пĕр ĕçрен те юлман. Конюх Александр Каштанов колхоз лашисене лайăх пăхать. Лайăх ĕçленĕшĕн ăна ĕçкунĕсене 10 процент ытларах памалла тунă,—пĕр сăмахпа каласан, кунта колхозниксем фронтри пек ĕçлеççĕ, вĕсене кулленхи ĕçре пултаруллă хĕрарăм—коммунистка Ольга Филипповна Каштанова хавхалантарса ертсе пырать.

2. Колхоз председателĕ

— Ульха аппа, кăштах тăхтăр-ха, тесе чарчĕ пире, хиртен колхоз правленине таврăнаканскерсене, Герасим Михеев, çÿлте асăннă мучи.—Эпĕ халĕ çулса пуçтарнă люцерна анисем çинче ирхи çĕртме тăвакан тракторсем валли шыв леçсе патăм,—терĕ вăл.

Тунă ĕç çинчен пĕлтерни мар, сухаллă мучи Ольга Филипповнăна «Ульха аппа» тесе чĕнни тĕлĕнтерчĕ пире. Колхоз председателĕ Каштанова юлташ мучирен нумай çул кĕçĕнрех-çке!

Шутласан, тĕлĕнмеллиех çук кунта. Каштанова юлташа колхозниксем ăшă кăмăлпа хисеплеççĕ, çакă çеç. Ăна председателе суйличчен колхоз кая юлса пынă. Ольга Филипповна хăйĕн ĕçне колхозри ĕç дисциплинине çирĕплетессинчен тытăнать. Колхоза ертсе пырас ĕçе актива явăçтарать. Çавăнпа вăл ертсе пыракан колхоз кăçалхи çуракине районра чи малтан тата пысăк пахалăхпа туса ирттерчĕ.

Çак кунсенче колхозниксем тырăсене çум курăкĕсенчен пĕр хут тасатса тухрĕç, 316 гектар ирхи çĕртме турĕç. Халĕ люцерна, клевер çулаççĕ, силос хываççĕ...

Колхоз уборкăна тимлĕн хатĕрленет. План тăрăх ыраша 6 кун хушшинче, çуртыррисене 8 кун хушшинче вырса кĕме, пăрça-ясмăксене 2 кун хушшинче çулса кĕме палăртнă.

«Тырă пухса кĕртесси вăл—пĕр сезонра тумалли ĕç, вăл кĕтсе тăма юратмасть. Вăхăтĕнче пухса кĕртрĕн—туянтăн, кая юлса пухса кĕртрĕн—çухатрăн» (Сталин). Кăна колхозниксем лайăх ăнланаççĕ. Çавăнпа кунта тырпула пухса кĕртме тимлĕн хатĕрленеççĕ. Транспорт инвентарĕсене юсаççĕ, паянхи куна 50 рыдван, 51 стан урапа уборкăна тухма хатĕрлесе лартнă. Жнейкăсемпе лобогрейкăсене юсаççĕ. Тырă вырнă вăхăтра колхозниксене уйрах апатлантармалла тăваççĕ. Пĕрлешÿллĕ столовăй уçма продуктсем хатĕрлесе хунă. Ун чухне ачасен яслийĕ татах пысăкланать.

— Эпир колхозсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвне хутшăнса вăтам шутпа кашни гектартанах çĕршер пăт тĕштырă туса илме, выльăх-чĕрлĕхĕн йышне планпа пăхнинчен 10 ĕне, 15 сурăх, 20 сысна ытларах пăхса усрама пултăмăр,—тет Ольга Филипповна.—Тума пулнă, эпир ăна тăватпăрах.

Колхозăн кăçал 1000 гектар ытла ыраш, тулă, сĕлĕ, пăрçа, урпа, çĕрулми, кок-сагыз, кантăр пухса кĕмелле.

— Ĕлкĕрейĕр-и?

— Ĕлкĕретпĕр!—Татса калать председатель. Çаплах çыр: эпир хамăрăн çарпа тăван çĕршыв валли ытлăн-çитлĕн тырпул, аш-какай, пахча-çимĕç парса тăма пултаратпăр.

3. Тимĕрçĕ Плешков

Пантелеймон Плешковпа Кирилл Казаков тимĕрçсене фронта ăсатнă хыççăн колхозра пĕр тимĕрç—Иван Иванович Плешков кăна юлнă. Иван Ивановичăн ĕçре хăйĕн уйрăм йĕрки пур: юратмасть вăл ĕçе кая хăварса пыма, анчах ĕлкĕр-ха хĕрÿ сунтал умĕнче пĕччен! Çавăнпа вăл çĕрĕн-кунĕн ĕçлет, ĕçре пиçнĕ вăйлă аллисемпе хĕрнĕ тимĕр çине кашни хут çапнă чухне фронта кайнă юлташĕсене аса илет.

...Пĕррехинче Каштанова юлташ тимĕрçĕ лаççине пырса кĕнĕ. Вăл жнейкăсемпе лобогрейкăсене епле юсаса ĕлкĕртсе пынипе паллашнă. Вată тимĕрç ку расра савăнтарайман ăна. 10 жнейкăран 5-шĕ çеç юсавлă, ыттисене юсама пайсем çитмен.

— Хуть те мĕнле пулсан та жнейкăсемпе лобогрейкăсене июлĕн 10-мĕш тĕлне юсаса çитерес пулать,—терĕ вăл.

Председателĕн сăмахĕ Плешков юлташшăн çирĕп закон. Хушнă—тумалла, пĕтĕм пултарулăхпа тавçăрулăха ĕçе хумалла. Иван Иванович машинăсен пайĕсене тупса пырать, хăшпĕрине юсаса çĕнетет. Тимĕрç лаççинчи вучах талăкĕ-талăкĕпех сивĕнмест. Машиновед Павел Уруков ĕнер Канаша «Сельхозснабсбыт» конторине машинăсен пайĕсем илме кайнă.

Уйхирте те, выльăхсен фермисенче те, тимĕрç лаççинче те—пур çĕрте те хĕрÿ ĕç вĕрет. Кунта та фронт. Йăлтах фронт валли! Йăлтах çĕнтерÿ тума!

П. НИКОЛАЕВ.

ЧКАЛОВСКОЕ, июнĕн 29-мĕш. (Хамăр корр.)

КАЗАНСКИЙ ГОСУДАРСТВЕННЫЙ УНИВЕРСИТЕТ ИМЕНИ В. И. УЛЬЯНОВА-ЛЕНИНА

об'являет прием студентов на 1-й курс 1942—43 учебного года.

Прием производится на физико-математический, химический, биологический, геолого-почвенный, историко-филологический и географический факультеты.

Студенты обеспечиваются общежитием и столовой.

Прием производится также на заочное отделение.

Заявления о приеме направляются по адресу: Казань, ул. Чернышевского, 18, Приемной комиссии (комн. № 26).

ЧУВАШСКИЙ СЕЛЬСКОХОЗЯЙСТВЕННЫЙ ИНСТИТУТ НКЗ СССР

объявляет прием студентов на 1942—1943 учебный год

на первый курс агрономического и зоотехнического факультетов. Институт готовит специалистов высшей квалификации по сельскому хозяйству—агрономов и зоотехников. Окончившие институт специалисты направляются на работу НКЗемом СССР.

В институт принимаются граждане СССР в возрасте от 17 до 35 лет, имеющие законченное среднее образование.

Заявления о приеме подаются на имя директора по адресу: Чувашская АССР, гор. Чебоксары, ул. Калинина, № 34.

К заявлению прилагаются следующие документы:

1. Автобиография.
2. Аттестат об окончании средней школы (в подлиннике).
3. Паспорт (пред'является лично).
4. Три фотокарточки.
5. Справка об отношении к воинской обязанности (для военнообязанных).

Учащиеся, окончившие среднюю школу в 1941 и 1942 гг. на «отлично» и «хорошо», принимаются в институт без испытаний.

При наличии к концу приема свободных вакансий без испытаний принимаются все окончившие средние школы в 1941 и 1942 гг.

Лица, поступающие в институт с испытаниями, держат таковые по: 1) русскому языку и литературе, 2) физике и 3) химии.

Заявления о поступлении в институт принимаются до 1 августа 1942 года.

Срок обучения в институте 3 года.

Отличники средней школы, лица, сдавшие два приемных испытания на «отлично» и одно не ниже «хорошо» и студенты, получившие на экзаменационной сессии в институте 2/3 оценок «отлично» и 1/3 «хорошо», а также участники отечественной войны, демобилизованные из Красной Армии по болезни, получают стипендию.

Особо нуждающиеся стипендиаты, а также дети пенсионеров и военнослужащих рядового и младшего начальствующего состава, а также участники отечественной войны, демобилизованные из Красной Армии по болезни, освобождаются от платы за обучение.

Учебники и учебные пособия предоставляются всем студентам бесплатно из библиотеки института.

При институте имеется студенческое общежитие с постельными принадлежностями и закрытая студенческая столовая.

ДИРЕКЦИЯ.

АЛАТЫРСКИЙ ЗООТЕХНИЧЕСКИЙ ТЕХНИКУМ

об'являет прием на 1-й и 2-й курсы на 1942—43 учебный год.

Техникум готовит зоотехников средней квалификации для госплемрассадников, зоотехнических участков райзо, племенных ферм совхозов, колхозных товарных ферм и др.

Срок обучения три года.

На первый курс принимаются граждане в возрасте от 15 до 35 лет. Без испытаний принимаются лица, окончившие в 1941 и 1942 г.г. не менее 7-ми классов неполной средней и средней школы, а также лица, демобилизованные из рядов РККА, имеющие подготовку не ниже НСШ.

Все остальные поступающие подвергаются приемным испытаниям по Конституции СССР, русскому языку и литературе, математике и физике в об'еме НСШ.

На II курс принимаются лица, окончившие 9 и 10 классы средней школы в 1941 и 1942 г.г.

Техникум обеспечивает нуждающихся общежитием и постельными принадлежностями (койка, матрац).

При техникуме имеется столовая. Стоимость питания за сутки (завтрак, обед и ужин) в среднем 2 рубля.

Стипендия выдается на общих основаниях.

К заявлению о приеме следует приложить:

1) свидетельство об образовании,
2) свидетельство о рождении,
3) справку о состоянии здоровья,
4) паспорт пред'является лично.

Для ответа прилагается марка на 30 коп.

Заявления принимаются до 25 августа с. г.

Приемные испытания с 25-го по 30-е августа.

На время испытаний поступающие обеспечиваются общежитием бесплатно.

ДИРЕКЦИЯ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 534 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 319. Ф. 6. 58 64 [illegible]